«Халăх тăрăшнипе, патшалăх пулăшнипе»

# Йӳçкасси тăрăхĕнче пĕвине те тасатаççĕ, çулне те такăрлатаççĕ

Йӳçкассисем вырăнта хăш ĕç кирлĕреххине аван туйса тăраççĕ, пуçарулăх бюджечĕн программипе усă курса çулсеренех икĕ-виçĕ е ытларах объектра ĕçсем туса пыраççĕ. Ытти çĕрти пекех халăх пуçарнипе, патшалăх пулăшнипе вырăнти пурнăç условийĕ лайăхланса пырать. Çынсем ыйтнине влаç илтет темелле пулĕ ун пек чухне. Йӳçкасси тăрăхĕнче 2021 çулта пуçарулăх бюждечĕн проекчĕ 4 пулнă. Тепĕр çулхине вара 2 объект хутшăннă. Ку тапхăрта вĕсем çул-йĕр çине тимлĕх ытларах уйăрнă пулсан, 2023 çулта пĕвсем юсассипе чылайрах ĕçленĕ.

Йӳçкассисем кăçал та пуçаруллă пулчĕç. Комисси вĕсен 6 проектне суйласа илчĕ. Пĕрремĕш проект – Çĕмĕрткасси ялĕнчи Водопроводная урамра пĕве тасатасси. Тепĕр проект Хурăнкасси ялĕнчи Восточная урамри 400 метр автоçула юсассипе çыхăннă. Ку ялта çавăн пекех тепĕр проект та пур. Восточная урамра пурăнакансем пĕве тасатас тенĕ. Çĕн Матьăкра пĕве тасатма, ăна валли 767 пин тенкĕ тăкаклама палăртнă. Тури Панклири Западная урамри çулăн пĕр пайне вак чул сарса хытарассин проекчĕ пур. Анатри Панклири проект – чи калăпăшли, ĕç хакĕ 5 миллион та 868 пин тенкĕ. Унта шыв пăрăхĕсен тытăмне улăштарас тĕллев тăрать.

Йӳçкасси территори пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, Тури Панклири Западная урамри çула вак чул сарса хытармалли лаптăк тăршшĕ 500 метр. Вăл 7-мĕш пӳрт патĕнчен пуçласа 17-мĕш пӳрт таран.

Ĕç подрядчикĕ – «Карьер Регион» чикĕллĕ яваплăхлă общество. Ĕç пурнăçлакансем тӳрĕ чунлă пулнине, пахалăхлă тата вăхăтлă ĕçленине пĕлтерчĕ вырăнти администраци. Асăннă организацималарах та çакăн йышши ĕçсене хутшăннă. Проектăн килĕшӳ хакĕ – 1 миллион та 600 пине яхăн тенкĕ, вăл шутра 935 пин ытла тенки – республика бюджетĕнчен, 470 пине яхăн тенки – вырăнти бюджетран, çынсенчен 155 пин ытла тенкĕ пухнă. Такăр çул халĕ пуриншĕн те меллĕ: çуран утаканшăн та, транспортпа пыраканшăн та. Çапла пĕрле тăрăшсан кун пек çулсем татах та пулĕç.

Çĕмĕрткассинчи Водопроводная урамра пурăнакансем пĕве питĕ кирлине лайăх пĕлсе тăраççĕ. Шухăшланă – тунă, тесен пачах та йăнăш мар. Ял пĕви илемшĕн кăна мар, пушар хăрушсăрлăхĕшĕн те, тепĕр чухне пахча шăварма та кирлĕ. Ку ĕçе çĕмĕрткассисене Алексей Тимофеев предприниматель туса пачĕ. Çак организаципе те йӳçкассисем ĕçлĕ хутшăнăва çирĕп тытаççĕ, пуçарулăх бюджечĕн проекчĕсене вăя кĕртессипе пĕрремĕш çул кăна мар ĕçлеççĕ.

Территори пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, проект килĕшĕвĕн хакĕ 430 пин тенкĕ ытла, вăл шутра 260 пин тенкĕ ытла – республика бюджетĕнчен, 130 пин тенкĕ ытла – вырăнти бюджетран, çынсем 43 пин тенкĕ ытла пухнă. Халĕ ку ĕçпе пурте кăмăллă.

Хурăнкасси ялне те çулсеренех хăт кĕрсе пырать. Çыннисем пуçаруллă та пултаруллă, йĕркелӳçисем пур, ӳркенсе тăмаççĕ – мухтамалла хурăнкассисене. Восточная урамра пурăнакансем те пĕве тасатас терĕç кăçал. Çак ĕçре те Алексей Тимофеев предприниматель пуçаруллăн ĕçлет. Хамăр тăрăхри çынсем çапла ĕçленипе кăмăллă йӳçкассисем.

Ĕç килĕшĕвĕ хурăнкассисен Çĕмĕрткассинчи объектран кăшт пĕчĕкрех, 356 пин тенкĕ ытларах. Çак ĕç валли республика бюджетĕнчен 214 пин ытла тенкĕ уйăрнă, вырăнти бюджетран – 107 пин тенкĕ, çынсен тӳпи – 35 пин ытла тенкĕ.

Вырăнти администрацинчен пĕлтернĕ тăрăх, çынсен ыйтăвĕсене тĕпе хурса малашне те пуçарулăх бюджечĕн программине хутшăнас кăмăллă. Çынсене ку ĕç мелĕ килĕшет, мĕншĕн тесен чылай çул кĕтмесĕрех вырăнти пысăках мар калăпăшлă ĕçсене тума май килет. «Çӳлтен татăнса анасса кĕтсе ларнипе нимĕн те пулмасть, пĕвисене вара пăхса юсасах тăмалла», – теççĕ çынсем.

**Сăн ӳкерчĕсенче: Тури Панклири Западная урамри çула вак чул сарса хытарнă вăхăт; пĕрле тăрăшнипе пĕве шывпа тулли.**





# «Çулĕ вăл пур çĕрте те кирлĕ, юсамалли объектсем татах та пур пирĕн»





Çапла пĕлтерчĕ депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕ Михаил Бычков халăх тăрăшнипе, патшалăх пулăшнипе кăçал Ильинка çăви патне каякан çула туни питĕ вырăнлă пулнине палăртса.

– Мана вырăнти çынсем шанаççĕ пулĕ тесе шухăшлатăп, пĕрремĕш созыв кăна мар район, халĕ округ шайĕнчи депутата суйларĕç. Шанăçа тӳрре кăлармалла, депутатăн çынсен ыйтăвĕсене татса парассине хутшăнмалла. Эпĕ çакна хамăн тӳрĕ тивĕç тесе ăнланатăп. Паллах, кунта пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемелле.

Хам енчен илес пулсассăн вырăнти ĕççене тума тата тĕрлĕ мероприяти ирттерме май пур таран пулăшма, ыттисене те çак ĕçе явăçтарма тăрăшатăп. Ильинка территорийĕнчи 17 ялăн ыйтăвĕ сахал мар, – терĕ депутат. Юлашки çулсенче республикăра, вăл шутра Ильинка территорийĕнче, ял çыннисен пурнăç условине лайăхрах тăвас тĕлĕшпе тĕрлĕ программăпа проект пурнăçланса пырать. Ку, паллах, ял çыннишĕн пысăк тĕкĕ.

Пуçарулăх бюджечĕн программине хутшăнни ильинкăсемшĕн те питĕ лайăх. Çынсем çак программăн уссине ăнланаççĕ, пĕлеççĕ. Çулсеренех 3 – 4 объекта юсаматепрен çĕнетме май тупаççĕ. Ильинкăсем 2021 çулта – 4 проект, 2022 çулта 3 проект пурнăçлама май тупрĕç. Иртнĕ çул та вĕсен 3 проект пулчĕ.

Çапла майĕпен Ильинка тăрăхĕ тирпейленсе, илемленсе пырать. Çынна пурăнма пурте кирлĕ – çул-йĕрĕ, ĕçмелли шывĕ, пушар хăрушсăрлăхĕ валли пĕви, ача-пăча площадки, паллах, çăва çине каймалли çулсăр та май çук. Çаксем йăлтах пĕрле тăрăшнипе – халăх пуçарнипе, патшалăх пулăшнипе – пулса пыракан ĕçсем. Инфраструктурăна аталантарассинче пуçарулăх бюджечĕн программипе анлă çул тупрĕ.

– Кăçал, паллах, çак енĕпе пирĕн пĕр объект кăна пулчĕ, ку та япăх мар. Çынсем тахçантанпах Ильинкăри çăва патне каякан çула тăвасшăнччĕ. Паллă ĕнтĕ, ку çул пурне те кирлĕ.

Эпĕ проектпа смета документчĕсене тутартăм. Ĕçĕ пĕчĕк мар, проектăн сметăпа палăртнă хакĕ 3 миллион та 666 пин ытла тенкĕпе танлашрĕ. Çул тума вырăнти çынсем 430 пин тенкĕ хыврĕç, предпринимательсен тӳпи – 20 пин тенкĕ. Çапла ильинкăсем çĕнĕ масар патнелле каякан çула вак чул сарса хытарчĕç, – калаçăва малалла тăсрĕ депутат.

Çак ĕçĕн подрядчикĕ «Карьер Регион» чикĕллĕ яваплăхлă общество пулнă. Çула йĕркеллĕ тата вăхăтра туса пĕтернĕ. Çынсем вĕсен ĕçне пăхсах тăнă.

– Проектра палăртнă тăрăх, малтан шывшур юхса тăма пĕр труба хурса хăварнăччĕ. Анчах та çакă сахал пулнă иккен. Çавăнпа тепĕр труба кирлине те ăнлантăмăр. Ку ĕçе питĕ васкавлăн тума тиврĕ. Юрать-ха активлисем тупăнчĕç. Пуçаруллă çынсем пулăшнипе кĕске вăхăтра 97 пин тенкĕ укçа пуçтармалла пулса тухрĕ. Кам мĕн чухлĕ пама пултарчĕ, çавăн чухлĕ пачĕ. Владимир Янушкинпа Артем Тимофеев вара ытларах та тӳпе хыврĕç.

Ильинка тăрăхĕнчи пуçаруллă, активлă çынсене тав тăватăп. Вырăнти çынсенчен тухнă ĕçсене малашне те пурнăçлама тăрăшăпăр, – терĕ Ильинка территори пайĕн пуçлăхĕ Марина Соколова.

**Сăн ӳкерчĕксенче: Ильинка çăви патне çул тунă вăхăтра.**

**Проект Чăваш Ен Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**